# СЕ МАН ИР

*Демократиллĕ Корея Халăх Республики*

## КОРЕЯ

Эс глобуса хуллен çаврăркалатăн,
Корея çĕршывне аран тупатăн.
Куратăн—тĕттĕм мĕлкĕ шăвăнать...
Анчах халь çĕр чĕри кунта тапать.
Тем тĕрлĕ этемсем çакăнталла çеç,
Куçне илмесĕр, тинкерсе пăхаççĕ:
Тĕл пулчĕç икĕ юхăм халь кунта—
Е çутă тĕттĕме çĕнтермелле,
Е тĕттĕм çăтса ярĕ-и çутта,—
Вĕсем вăрçаççĕ пур вăйĕпеле.
Кунта тăпра пăтрашрĕ кĕлпеле.
Пĕр утăмĕ те çук алтăнманни.

Анчах „садсем ешерӗç ак каллех!“
Тет Çӗрӗн тӳрӗ кăмăллă çынни.
Ешерӗçех! Корейăн паттăр çарӗ
Çӗрне кăкăрӗпе витсе хăтарӗ!